**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

**Министерство образования и молодежной политики Чувашской Республики**

**Отдел образования и социального развития администрации Цивильского муниципального округа**

**МБОУ "Малоянгорчинская ООШ им.В.Т.Трофимова"**

УТВЕРЖДЕНО

Директор

И.Л. Иванова Подписано цифровой подписью: И.Л. Иванова

Иванова И.Л.

Приказ № 111-ОД

от «31» 08 2023 г.

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

**учебного предмета**

**«Родной (чувашский) язкык»**

для обучающихся 1-4 классов

**Малое Янгорчино 2023**

**Умĕн калани**

Пуплеве пур енлĕн аталантарасси вулас, çырас, çыхăнуллă калаçас, тăнласа ăнланас мехелсене куллен вăйлатни çинче никĕсленсе тăрать. Шăп çавăнпа ĕнтĕ тăван чĕлхе урокĕсенче çыхăнуллă текстпа ĕçлесси тĕп вырăнта пулмалла. Ачасем ăна вуласа е тăнласа ун тăрăх калаçаççĕ, хăйсем текст хайлаççĕ, çыру хăнăхтарăвĕсем пурнăçлаççĕ.

Пуплеве аталантармалли тепĕр ăслай — ачасем тăван чĕлхери морфологи мелĕсемпе, урăхла каласан, сăмахсен тĕрлĕ формипе усă курма пĕлнине куллен лайăхлатасси.

Пуплеве аталантарассин виççĕмĕш ене вăл — ачасене пуплеве тииткерме хăнăхтарни, урăхла каласан, чĕлхе тишкерĕвне вĕрентни. Ку вăл пуплеве фонетикăпа графика. орфографипе пунктуаци, морфологипе синтаксис, сăмах тытăмĕпе сăмах пулăвĕ енчен ансаттăн тишкерессипе çыхăнать.

Челхе «мулĕн» тĕрлĕ сийне тишкересси класран класа анлăланса пырать, пуплеве аталантарассин тĕллевĕсемпе тачă çыхăнать. Тăван чĕлхене тишкерме вĕрентесси пуçламăш классенче çакнашкал йĕркепе пулса пырать.

**Сасăсемпе сас паллисем.** Вĕсем хушшинчи уйрăмлăхсем çинчен ачасем I—II классенчех пĕлеççĕ. Сасăсем усă тата хупă, хытă тата çемçе, янравлă тата янравсăр пулнине палăртма вĕренеççĕ; ***сыпăк, пусăм*** ăнлавсемпе паллашаççĕ, схемăпа усă курса сăмахсен сасăпа сас палли тытăмне тишкереççĕ. Вулама-çырма вĕренмелли кашни урокрах ачасем пуплевĕн ансат тĕслĕхĕсене пăхса тухаççĕ, çавнамай фонетика терминĕсемпе усăкурматахăнăхаççĕ, II класра фонетикăпа графика тишкерĕвĕ тĕрĕс çырма вĕрентессипе тата пуплев кăлтăкĕсене юсассипе çыхăнать.

II-IV классенче ачасен çак пĕлĕвĕсемпе ăслайĕсем, хăнăхăвĕсем малалла аталанаççĕ. Вĕсен пуплеве тăнлас-итлес сисĕмĕ çивĕчленет, сăмахăн сасăпа сас палли тытăмне чухласси лайăхланать. Ку тапхăрта фонетикăпа графика тишкерĕвĕпе усă курнин тĕп тĕллевĕсем — йăнăшсăр çырса илес, илтнипе çырас, çырнине тĕрĕслес ăслайсене вĕрентесси, тĕрĕс çырас хăнăхусене лайăхлатасси.

**Сăмах.** Пуçламăш шкулта вĕренекенсен сăмах йышне пуян-латăссйне тăватă çулĕпех тĕп тĕллевсенчен пĕри тесе шутламалла. Ку тĕллеве пуплеве пур енлĕн аталантармалли уроксенче тĕрлĕ хăнăхтару тутарса пурнăçламалла. Чĕлхемĕрти сăмахсем вăл е ку япалана, пулăма, вĕсен ĕçне т.ыт.те палăртнине, пĕлтерĕшĕпе çывăх е хире-хирĕç пулнине, предложенире, текстра сăмахпа темиçе пĕлтерĕшпе усă курма май пуррине ачасем чĕлхе теорине тӳррĕн вĕренсе мар, тĕрлĕ хăнăхтару, сăнавсем тунă май куç кĕрет курмалла. Вĕсем шухăша тĕрĕсрех палăртакан сăмахсене суйлама вĕренсе пыраççĕ, сăмах йышĕ пуянланса пырать, унпа усă курасси лайăхланать.

II класра сăмах тытăмĕпе ***(сăмах тымарĕ, пер тымарлă сăмахсем)*** паллаштарма пăхнă. Анчах ку терминсемпе паллаштаричченех сăмахсем пĕлтерĕшлĕ пайсенчен тăнине асăрхама пулăшакан, вăл е ку пĕлтерĕшлĕ пай пуррине кура сăмахăн пĕлтерĕшне тавçăрма вĕрентекен хăнăхтарусемпе усă курмалла. Çакă ачасен сăмах йышне пуянлатас ĕçре пысăк вытрăн йышăнмалла.

III класра сăмах тытăмне туллинрех вĕренме палăртнă. Вулав татаçыру хăнăхтарăвĕсем пурнăçланă май вĕренекенсем ансат тĕслĕхсенче сăмах тавакан тата сăмаха улăштаракан аффикссене асăрхама пуçлаççĕ, çапла вара вĕсем сăмахпа сăмахăн форми хушшинчи уйрăмлăха курма хăнăхаççĕ.

IV класра маларах вĕреннĕ пуллев пайĕсемпе тĕплĕнрех паллаштарма. япала ячĕсем мĕнле ӳкĕмрине чухлама, терминпа усă курма, анлă усă куракан сăмахсене тĕрлĕ ӳкĕмре лартма, тĕрĕс калама тата çырма вĕрентмелле.

**Предложени.** Кĕҫĕн классенче вĕренекенсен: 1) предложени пуплевĕн тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă е хистевлĕ (хушуллă) пулнине, ăна мĕнле каланине кура - кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни синчен; 2) предложени членĕсем ҫинчен; 3) предложенири сăмахсен ҫыхăнăвĕ ҫинчен; 4) предложени сăмах майлашăвĕсенчен тăни ҫинчен пĕлмелле, Ҫак ăнлавсемпе ачасене 4 ҫул хушшинче ерипен паллаштарса ҫитермелле.

I класра ачасем предложение пуплевре асăрхама, ăна сăмах-ран уйăрма, ăна (тишкернĕ хыҫҫăн) ҫырма, пысăк сас паллинчен пуҫлама, вĕсĕнче пăнчă лартма вĕренеҫҫĕ.

II класра предложени вĕҫĕнче, пăнчăсăр пуҫне, ыйту е кăшкăру палли лартассипе паллашаҫҫĕ, уйрăм сăмахсене палăртса калама, предложени вĕҫĕнчи паллăпа тивĕҫӳллĕ интонаци тума хăнăхаҫҫĕ.

III класра вĕренекенсем предложени пуплев тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ, интонацине кура - кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни ҫинчен пĕлмелле, предложенин ҫак тĕсĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхмалла.

IV класра ачасем пĕр йышши членлă (япала ячĕпе паллă ячĕ-сенчен, глаголтан пулнă тĕслĕхсем) предложенисемпе паллашаҫҫĕ. Ку предложенисене тĕрĕс интонаципе калама, вĕсемпе калаҫура тата ҫырура усă курма, пĕр йышши членсене ҫырура хӳреллĕ пăнчăпа (ансат тĕслĕхсем) уйăрма вĕренмелле.

**Ҫыхăнуллă пуплев.** Кĕҫĕн ҫулхи ачасем малашне мĕнле вĕренсе пырасси, ăс-тăн илесси пуплевпе шухăшлав аталанăвĕнчен килет. Ҫавна кура ҫыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсем кашни урок-рах тĕп вырăнта пулмалла. Вĕсене текста вулассипе, тăнлассипе ҫыхăнтармалла, вĕсемпе пĕрлех текст тăвасси те, ăна ҫырасси те кашни класрах тивĕҫлĕ вырăн йышăнмалла.

### Ăславлă (творчествăллă) ҫыру урокĕсем

Программăри тăван чĕлхе курсĕнче ятарласа ăславлă ҫыру урокĕсем палăртнă. Вĕсене II класран пуҫласа икĕ эрнере пĕрре ирттермелле.

Ҫыру урокĕсене тĕллевлĕ те тухăҫлă ирттерес тесен кашни вĕренӳ чĕрĕкĕнче миҫе изложенипе сочинени ирттермеллине, вĕсенчен хăшĕсем сăмах вĕҫҫĕн тата ҫырса пурнăҫламаллисем пулмаллине, текст тума вĕренессин хăш йывăрлăхĕсемпе ҫыхăнмаллине, тăван чĕлхе ытти уроксемпе мĕнле шайлашмаллине малтанах палăртса хумалла.

Аслав ҫыру урокĕсем чĕлхе урокĕсемпе тачă ҫыхăнса тăмалла.

Изложенипе сочинени калăпăшĕ пуҫламăш классенче пысăк пулмалла мар. Вĕсене тӳрех тасан ҫыртармалла, икĕ хут ҫыртарса пĕр урокран ытла тăстармалла мар. Пĕчĕкрех ĕҫсене вулав тата чĕлхе урокĕсенче ирттерме е класра лайăх хатĕрлентерсе киле пама та юрать.

### Ҫырма вĕрентесси. Тĕрĕс те илемлĕ ҫырасси.

Таса та илемлĕ ҫырма вĕрентме программăра ятарлă уроксем палăртман. Ку ĕҫе тăван чĕлхе урокĕсенче куллен туса пымалла. I класра ҫыру хăнăхтарăвĕсене «Ҫыру тетрачĕпе» усă курса йĕркелемелле. Алă хусканăвне, куҫ виҫине лайăхлатмалли ятарлă хăнăхтарусем I—II классенче тăтăшах тутармалла. Кăткăсрах сас паллисене ҫырма, вĕсене ҫыхăнтарма пĕлнине лайăхлатас тĕллевпе III—IV классенче те ятарлă хăнăххарусем тăтăшах ирттермелле, алăпа ҫырнă е пичетленĕ сăмахсене, предложенисене, текста ҫырса илмелли, шутланă тата итленĕ тăрăх ҫырмалли ĕҫсем сĕнмелле.

## КĔТЕКЕН РЕЗУЛЬТАТСЕМ

**Вĕренĕвĕн Универсаллă Действийĕн ушкăнĕсем**

Пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн тĕп тĕллевĕсемпе килĕшӳллĕн ВУД 4 ушкăнне уйăрма пулать: харкамлă (личностный), регулятивлă, пĕлӳсем туянас (познавательный) тата хутшăнуллă (коммуникативлă).

**Харкамлă ВУДсем**

*Вĕренӳ ĕç-хĕлĕпе çыхăнтарса, харкамлă ĕçсен виçĕ тĕсне уйăратпăр:*

1. Професси тĕлĕшĕнчен харкам вырăнне шырани.
2. Пĕлтерĕшлĕх (вĕренӳ тĕллевĕпе сунăмĕ, е, урăхла каласан, вĕренӳ результачĕпе унăн кирлĕлĕхĕ хушшинчи çыхăнăва палăртни). Вĕренекенĕн хăйне çак ыйтăва памалла та ăна хуравлама пултармалла: «Мĕн тума тата мĕн тĕллевпе вĕренетĕп эпĕ?»
3. Кăмăл-сипетлĕх ориентацийĕ. Вĕренсе ăса хывакан содержание харкамлăх тата социаллă опыта кура мораль тĕлĕшĕнчен хаклани.

**Регулятивлă ВУДсем**

1. Мĕн пĕлнине тата мĕн пĕлменнине шута илсе вĕренӳ задачине палăртмалли тĕллеве лартни.
2. Ĕçсен йĕркин планне туни; вĕçĕнчи результата кура пайăр ĕçсен тĕллевĕсене палăртни.
3. Прогноз туни. Урăхла каласан, результата тата туянакан пĕлӳсен шайне малтанах курса тăни.
4. Ĕç майне тата унăн результатне малтанах палăртнă калăппа танлаштарса тĕрĕслени.
5. Коррекци - результата вĕренекен хăй, юлташĕсем тата учитель хаклавне кура плана тата ĕç майĕпе йĕркине улшăнусем кĕртни.
6. Хаклав – мĕне вĕреннине тата мĕне вĕренмеллине, вĕреннин шайĕпе пахалăхне вĕренекен хăй палăртни; ĕç результатне хаклани.
7. Саморегуляци – йывăрлăхсене çĕнтермелли майсене тупса палăртас пултарулăх.

**Пĕлӳсем туянас ВУДсем**

Кунта пĕтĕмĕшле вĕренӳ(1), паллăпа символ ĕçĕсене (2) логика вĕренӳ ĕçĕсене(3) тата ыйтăва лартса ăна татса панине(4) кĕртетпĕр. Вĕсене хăйсене çапларах вакласа яма пулать.

*1. Пĕтĕмĕшле вĕренӳ универсаллă ĕçсем:*

- пĕлӳсене туянас тĕллеве харпăр хăй тĕллĕнех уйăрса палăртни;
- пуçламăш шкулшăн шăл çемми ИКТ тата информацин ытти çăлкуçĕсемпе усă курса тивĕçлĕ информацие тупса уйăрни;
- пĕлӳсен тытăмне палăртни;
- сасăллă тата çыруллă пуплев ăслани;
- конкретлă условисенче задачăна шутламалли уйрăмах тухăçлă мелсемпе майсене суйласа илни;
- ĕç майĕсемпе условийĕсен рефлексийĕ, ĕç юхăмĕпе результачĕсене тĕрĕслени тата хаклани;
- вулав тĕллевне тата вулав тĕсне суйласа илме ăнланса вулани; тĕрлĕ жанрлă текстсене итлесе тивĕçлĕ информаци илни; тĕп тата иккĕмĕшле информацие палăртни; илемлĕ, ăслăх, публицистика тата официаллă ĕç стилĕсемлĕ текстсене ирĕклĕнех ăнланса йышăнни; массăллă информаци хатĕрĕсен чĕлхине ăнланса хак пани;
- проблемăна лартса калăплани, творчествăллă тата шыравлă проблемăсене татса пана чухне харкам тĕллĕнех ĕç алгоритмне туни.

*2. Паллăпа символ ĕçĕсем:*

- калăпсем туни – обьекта туйăм форминчен калăпа (уçлăхпа графика е паллăпа символ) куçарни;
- пĕтĕмĕшле законсене палăртас тĕллевпе калăпа юсаса урăхлатни.

*3. Логика вĕренӳ ĕçĕсем:*

- анализ - обьекта тĕп тата иккĕмĕшле паллисене кăтартас тĕллевпе сӳтсе пăрахни;
- синтез – пайсене пĕр çĕре пуçтарни, çав шутра сиксе юлнă пайсене хушни те;
- обьектсене танлаштармалли, ушкăнламалли критерисемпе никĕссене суйласа илни;
- ăнлав патне илсе çитерни, сăлтавпа тĕллев çыхăнăвĕсене кăтартни;
-рассужденисен логикăллă сăнчăрне йĕркелени, çирĕплетсе каланин тĕрĕслĕхне сӳтсе явни;
- доказательство;

- гипотезăсем кăларса тăратса вĕсене сăлтавлани.
*4. Ыйтăва (проблемăна) лартса ăна татса пани:*
- ыйтăва лартни;
- творчествăллă тата шыравлă ыйтусене татса памалли майсене харкам тĕллĕн туни.

**Хутшăнуллă ВУДсем**

1.Учительпе тата тантăшсемпе хутшăнса вĕренессине планлани – кашни хутшăнаканăн тĕллевĕпе функцийĕсене, хутшăну майĕсене палăртни.
2.Ыйтусем лартни – информаци шырас тата пуçтарас ĕçе хастар хутшăнса хăюллăнах ыйтусем лартни.
3.Конфликтсене татса пани – проблемăна асăрхани, конфликта тепĕр майлă татса памалли майсене шырани тата пахалани, юрăхлă майпа усă курни.
4.Партнер хăтланчăкне (поведение) ертсе пыни – тĕрĕслени, тÿрлетни, унăн ĕçĕсене хаклани.
5.Харкам шухăшсемпе сунăмсене хутшăну задачисемпе условийĕсене кура туллин те тĕрĕс палăртни; монологла тата диалогла пуплев тунă чухне тăван чĕлхен грамматика нормисемпе тĕрĕс усă курни.

## ПЛАНИРУЕМЫЕ РЕЗУЛЬТАТЫ ИЗУЧЕНИЯ УЧЕБНОГО ПРЕДМЕТА

### Ачасен 1 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результачĕсем.

**Харкамлăх результачĕсем:**
- ачасем хăйсем вĕренекен пулнине ăнланни, вĕренекенĕн яваплăхĕсене уçăмласа пыни;
- ачасем Тăван çер-шыв, тăван халăх, тăван чĕлхе ăнлавĕсене ăша хывни, хăйсем хăш халăх ывăл-хĕрĕ пулнине ăнланни, вĕсен тăван халăха хисеплес туйăм амаланма пуçлани;
- ачасем таврари пурнăç, этем, çут çанталăк çинчен мĕн пĕлни анлăланма пуçлани, тавра курăмĕ йĕркеленсе пыни;
- харпăр хăйĕн тата тантăшĕсен ĕç-хĕлне сăнас-хаклас ăслай-хăнăхусене алла илсе пыни.

**Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**
- ачасен шухăшлавĕ пур енлĕн аталанса пыни, вĕсем тишкерÿ, пĕтĕçтерÿ, пĕтĕмлетÿ ĕçĕсене вĕренсе пыни;
- ачасен пуплевĕ пур енлĕн аталанса, вĕсем пуплев ĕçĕ-хĕлĕсене (итлев, вулав, çыру, калу) вĕренсе пыни;
- кĕнекепе ĕçлеме вĕренсе пыни.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**
- тăван чĕлхери тĕп сасăсене, вĕсене палăртмалли сас паллисене, сăмахри сасăсен пахалăхне (уçă е хупă), йĕркине, хытă тата çемçе сасăсене сăмахра паллама, çырура палăртма пĕлни;
- сăмахсене, предложенисене, пысăк мар тĕрлĕ жанрлă текстсене вуласа ăнланма пултарни;
- пур сасă пуххи сăмах, сăмах пуххи предложени пулайманнине ăнланни;
-сас паллисене (пĕчĕккисене тата пысăккисене), вĕсен çыхăнăвĕсене, сăмахсене, предложенисене тĕрĕс евĕрлесе çырса илме, тĕрĕслеме вĕренни;
- уйрăм сăмахсене, 3-4 сăмахран тăракан, тытăмĕпе ансат предложенисене илтнĕ тăрăх çырма пултарни;
- чĕлхе пĕлĕвĕн хăш-пĕр ансат ăнлавĕсемпе терминĕсене (уçă е хупă сасă, сас палли, сыпăк, сăмах, предложени, текст) уçăмлани.

### Ачасен 2 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результачĕсем.

**Харкамлăх результачĕсем:**
- тăван чĕлхене хаклама, хисеплеме хăнăхса пыни;
- кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи пулнине, вăл ыттисенчен уйрăлса тăнине ăнланни;
- чĕлхепе кăсăкланма пуçлани, харпăр хăй пуплевне лайăхлатас кăмăл-туйăм амаланни.

**Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**
- пулăмсене тарăнрах ăнланма вĕренсе пыни;
- ăнлавсене уçăмлама, ушкăнлама хăнăхса пыни;
- тишкерÿ-пĕтĕçтерÿ, танлаштару хăнăхăвĕсем çирĕпленсе пыни.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**
- ачасем алфавитри сас паллисене, вĕсен пĕлтерĕшĕсене, уçă тата хупă сасăсен уйрăмлăхĕсене, сăмахри уçă сасă çине пусăм ӳкни-ӳкменнине, сасăсем хытă тата çемçе пулнине, сăмахсене пĕр йĕркерен теприне мĕнле куçармаллине пĕлни;
- 35 – 40 сăмахлă текста каллиграфии тĕлĕшĕнчен тĕрĕс те таса, сас паллисене сиктерсе хăвармасăр, пăтраштармасăр пăхса çырма пултарни;
- 25 – 30 сăмахлă текста итленипе (диктант) çырма вĕренсе пыни;
- сăмаха сыпăклама, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма, çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма, вăрăм хупă сасăллă сăмахсене тĕрĕс çырни;
- çын ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне. Выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çырма пултарни;
- сăмахсен сасă тытăмне тишкерме (вĕсене сыпăклама, уçă тата хупă сасăсене сасăсемпе сас паллисен йĕркине тата хисепне палăртма) пĕлни;
- япалана, унăн ĕçне, паллине пĕлтерекен сăмахсене ыйтăвĕ тăрăх ушкăнлама пултарни;
- предложенин тĕп членĕсене – подлежащипе сказуемăя – тупма пĕлни;
- ыйтусем тăрăх ансат предложении членĕсем хушшинчи çыхăнăва палăртма вĕренни;
- предложение пысăк сас паллирен пуçласа çырма, ун вĕçне, интонацие кура, пăнчă, ыйту е кăшкăру пали лартма пĕлни;
- 30 – 45 сăмахлă текст тăрăх ыйтусене хуравласа изложении çырма; 2-3 предложениллĕ текст тума пултарни.

### Ачасен 3 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результачĕсем.

**Харкамлăх результачĕсем:**
- ачасен тăван чĕлхене тĕплĕнрех вĕренес, харкамăн пуплев ĕç-хĕлĕсене аталантарас кăмăлĕ амаланни;
- тантăшĕсен тата харкам пуплевне сăнама, тĕрĕслеме вĕренсе пыни;
- тăван чĕлхе пуянлăхĕпе, илемĕпе киленме пуçлани.

**Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**
- тĕрлĕ текста тишкерме, тӳрлетме вĕренсе пыни;
- пуплев культурин енĕсене тимлеме хăнăхса пыни;
- калура тата çырура пуплев тата хутшăну этикечĕн нормисене тытса пыма хăнăхса пыни;
- урокра тата тулашĕнче харпăр хăй ĕçне йĕркелеме вĕренсе пыни.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**
- сăмахăн тĕп пайĕсем – унăн тымарĕпе аффиксĕсем; пуплев пайĕсем – япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ; предложенин тĕп тата кĕçĕн членĕсем пулнине пĕлни;
- вĕреннĕ орфограммăсенчен тăракан 40-45 сăмахлă текста таса, тĕрĕс та илемлĕ çырса илме, итленипе (диктант) çырма, предложенисем вĕçĕнче кирлĕ чарăну (пăнчă, ыйту е кăшкăру) пали лартма пултарни;
- сăмахсен сасă тытăмне сăнама: сыпăксене уйăрма, уйăрма, уçă тата хупă сасăсене палăртма, уçă сасă çине пусăм ӳкни-ӳкменнине пĕлме, хупă сасă хытти-çемçине, янăравлă-янăравсăррине туйма, сăмахри сасăпа сас пали хисепне уяма хăнăхса пыни;
- сăмах тытăмне (тымарĕпе аффиксне) курма пултарни;
- пуплев пайĕсене (япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ) палăртма, вĕсем мĕнле формăрине (япала ячĕсен хисепне, глаголсен вăхăчĕпе хисепне) чухлани;
- предложенири сăмахсен çыхăнăвне асăрхани, сăмах майлашăвĕсене уйăрни;
- предложени тытăмне (синтаксисне) ансат тишкерме (вăл калуллă, ыйтуллă е хистевлĕ, кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулнине палăртма, унăн тĕп тата кĕçĕн членĕсене, вĕсем хушшинчи çыхăнăва ыйту лартса тупма) пĕлни;
- ушкăнпа тунă е хатĕр планпа усă курса 55-65 сăмахлă изложении çырма вĕренсе çитни.

### Ачасен 4 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результачĕсем.

**Харкамлăх результачĕсем:**

-таса, тӗрӗс, вырӑнлӑ пуплев ҫыннӑн сапӑрлӑх тата пӗтӗмӗшле аталанӑвӗн палӑрӑмӗ пулнине ӑнланни;
-чӗлхепе тирпейлӗ, тӗрӗс усӑ курма вӗренес кӑмӑлӗсем ҫирӗпленни;
-хутшӑну культурин правилисемпе килӗшӳллӗн вӑхӑтра тав тума, каҫару ыйтма, саламлама, вашават сӑмах хушма, япала ыйтса илме, чӗнӗве палӑртма пӗлни;
-чӗлхе харкам ӑславлӑ пултарулӑхне, шухӑш вӗҫевне палӑртмалли, аталантармалли хатӗр пулнине ӑнланни.

**Предметсен пӗрлӗхлӗ результачӗсем:**

-чӗлхе тӗп хутшӑну хатӗрӗ, наци культурин единици, вӗренӳ тата аталану хатӗрӗ пулнине ӑса хуни;
-чӗлхен тӗрлӗ ҫӑл куҫсенче кирлӗ тивӗҫлӗ информаци тупма, ӑнҫлӑ усӑ курма хӑнӑхса пыни;
- чӗлхе хатӗрӗсемпе хутшӑну тата вӗренӳ задачисемпе шайлашуллӑ тивӗҫлӗ усӑ курма вӗренсе пыни.

**Предметӑн пайрам результачӗсем:**

- вӗреннӗ пуплев пайӗсем, вӗсен паллисем, предложенин пӗр йышши членӗсем ҫинчен ҫирӗп пӗлни;
- вӗреннӗ орфограммӑсенчен тӑракан 55-60 сӑмахлӑ текста йӑнӑшсӑр, таса та илемлӗ ҫырса илме, диктант ҫырма пултарни;
-пӗр йышши членлӑ предложенире чарӑну паллисем лартма вӗренни;
-сӑмахӑн сасӑпа сас пали тытӑмне тишкерме, тымарӗпе аффиксӗсене тупма хӑнӑхни;
-япала ячӗсен, сӑпат ылмашӗсен падежӗпе хисепне, глаголсен хисепне, сӑпачӗпе вӑхӑтне палӑртма пултарни;
-предложенин ансат синтаксис тытӑмне чухлама: вӑл тӗллевпе интонаци тӗлӗшӗнчен мӗнлине калама, унӑн тӗп членӗсемпе кӗҫӗн членӗсене тупма, ыйтусем тӑрӑх вӗсен ҫыхӑнӑвне тата пӗр йышши членсене асӑрхама хӑнӑхса пыни;
-харпӑр хӑй тӗллӗн тунӑ планпа усӑ курса 80-90 сӑмахлӑ текст тӑрӑх изложении ҫырма, пурнӑҫра пулни-иртни, экскурсире курни, сӑнани ҫинчен ҫыхӑнуллӑ пӗчӗк калав йӗркелеме (сочинении ҫырма) вӗренсе пыни.

## Програма тытамӗ.

**Ҫыхӑнуллӑ пуплев.** Пуплевӗн пурнӑҫри пӗлтерӗшӗ.
Текст. Ӑна темӑпа ҫыхӑнман предложенисен пуххипе танлаштарасси. Текстра мӗн ҫинчен каланине (текст темине) палӑртасси. Текста темиҫе сыпӑка (пая) уйӑрасси. Пысӑках мар текста, унӑн пайӗсене ят парасси.
Ӳкерчӗксемпе ӗҫлесси. Ӳкерчӗксем тӑрӑх ыйтусене хуравласси, предложенисем тӑвасси. Вӗсене ҫырасси.
Изложении ҫинчен ӑнлантарасси.
Ыйтусене ушкӑнпа хуравланӑ, йывӑр орфограммӑсене асӑрхаттарнӑ хыҫҫӑн вӗрентъӗӗ пулӑшнипе 30-45 сӑмахлӑ текст тӑрӑх изложени ҫырасси.
Ачасен пурнӑҫӗпе ҫыхӑннӑ темӑсемпе (вӑйӑ выляни, вӑрмана экскурсие кайни, кама та пулин пулӑшни, шкул ҫинчен) 4-5 предложенирен тӑракан пӗчӗк калав тӑвасси.
**Пуплев этикечӗ**. Сывлӑх сунни. Сывлӑх суннӑ чух усӑ куракан тараватлӑх сӑмахӗсемпе сӑмах майлашӑвӗсем. Паллашу сӑмахӗсемпе предложенисем. Сӑпайлӑн тав тума пӗлесси. Сыв пуллашу сӑмахӗсем.
**Ӗҫ хучӗсем**. Ансат пӗлтерӳ хайласси. Юлташ патне ҫыру ҫырасси.
**Чӗлхене ансат тишкересси, терминсемпе усӑ курасси**
**Алфавит**. Саспаллисен ячӗсем тата йӗрки. Уҫӑ тата хупӑ сасӑсем. Хытӑ тата ҫемҫе сасӑсем. Пӗр-пӗр саспаллипе пуҫланакан сӑмахсене словарьте шыраса тупма вӗрентесси. Сӑмахсене алфавит йӗркипе вырнаҫтарма хӑнӑхтарасси (пуҫламӑш сас палли тӑрӑх).
**Япалана пӗлтерекен сӑмахсем**. Вӗсене кам? тата мӗн? ыйтусем тӑрӑх тупасси.
**Япала ӗҫне пӗлтерекен сӑмахсем**. Вӗсене мӗн тӑвать? мӗн тӑвӗ? мӗн турӗ? ыйтусем тӑрӑх тупасси.

**Япалан тата унăн ĕçĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем**, вĕсене мĕнле? ыйту тăрăх тупасси.
**Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнласси**. Хирĕçле _пĕлтерĕшлĕ сăмахсем (хура - шурă, пысăк - пĕчĕк, сарлака - ансăр, пылак - йӳçĕ). Ĕывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: васка - хыпалан, кил - пыр, усал - хаяр, аван - лайăх, илемлĕ - хитре, чипер.
**Лексикăпа тематика ушкăнĕсем**: а) тĕс ячĕсем (хĕрлĕ, сарă, шурă, хура, хăмăр, кăвак т.ыт.те; çӳрен, турă, хăла, ула, сарă-хăла (лаша çинчен); ă) çынна хаклакан сăмахсем (чипер, илемлĕ, тирпейлĕ, тăрăшуллă, ĕёчен, кахал, наян, мăнтăр, начар т.ыт.те).
**Предложени**. Пуплеври предложенисене уйăрасси (маларах вĕреннине ĕирĕплетесси). Предложенин тĕп (подлежащипе сказуемăй) тата кĕçĕн членĕсем (ячĕсене асăнмасăр).
Тĕрлĕ калăплă (тытăмлă) предложенисем тума тата çырма хăнăхтарасси. Вĕсене (кам? мĕн? камăн? мĕнĕн? кама? мĕне? камра, мĕнре? камран? мĕнрен? кампа? мĕнпе? камсăр? мĕнсĕр? камшăн? мĕншĕн?) ыйтури сăмахсемпе анлăлатасси.
**Пунктуаци**. Предложени вĕçне пăнчă, ыйту тата кăшкăру паллисем лартасси.
**Орфографи**. 1) Хытă уĕă сасăллă сыпăк е сăмах вĕçĕнчи [л'], [н'], [т'] сасăсене л, н, т саспаллисем хыççăн çемçелĕх палли (ь) çырса палăртасси.
2) Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси.
3) Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас паллипе палăртасси.
4) Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куĕарасси.
5)Çын ячĕпе хушаматне тата ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк саспаллирен пуçласа çырасси.
6) Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çырасси.
**Пуплев ĕçĕн тĕсĕсем**
**Итлесси.** ачасем вĕрентекен хушăвĕсемпе кĕске пĕлтерĕвĕсене тата юлташĕсем каланисене итлесе ăнланасси.
Текст содержанине туллин ăнланса илмелли пĕлӳсене тата хăнăхусене аталантарасси.
Текстăн тĕп содержанине ăса хывса ăнланмалли пĕлӳсемпе хăнăхусене аталантарасси.
**Калаçасси.** Çанталăк çинчен каласа парасси (халĕ мĕнле çанталăк: ăшă е сивĕ, çумăр, юр çăвать е уяр, хĕвел пăхать т. ыт. те), çулталăк вăхăчĕсем (пĕр-пĕр вăхăтра çутçанталăкăн мĕнле пулăмĕсем палăраççĕ: çумăр, юр; ачасем çулталăкăн ку е вăл вăхăтĕнче мĕн-мĕн тăваççĕ).
Пĕр класра вĕренекен ача çинчен каласа парасси: вăл миçере, унăн сăнĕ-пичĕ, тумтирĕ, вăл мĕн тума юратать. Юратнă уяв (мĕнле уяв вăл, хăçан килет, ăна мĕнле паллă тăваççĕ), юратнă апат-çимĕç.
Кĕске калавсем хăйласси: çулла ăçта пулни, унта мĕн курни çинчен, мĕн-мĕн ĕçлени, сывлăха епле çирĕплетни çинчен. Шкул çинчен, кружоксем çинчен, юратнă учительсем, вĕренӳ, расписани çинчен (хăш-хăш кун мĕнле предметсем пулаççĕ). Мĕн тума юратни çинчен, килти юратнă чĕр чун çинчен (мĕн ятлă, миçере, кăмăлĕ, кĕлетки мĕнле, унăн тĕсĕ, мĕн-мĕн çитеретĕн ăна). Зоопаркра курнă пĕр-пĕр чĕр чун çинчен.
Юлташа (пĕр класра вĕренекене) ăçта та пулин каймашкăн чĕнме, сĕннипе килĕшме е хирĕçлеме хăнăхасси. Юлташран ерçӳллĕ вăхăтра мĕн-мĕн туни, мĕн тума кăмăллани, ӳссен кам пулма ĕмĕтленни çинчен ыйтса пĕлесси. Çуллахи кану, юратнă уяв (ăна епле ирттерни) çинчен калаçасси. Пĕр- пĕрне, пĕлĕшсене, хурăнташ-тăвансене саламлама, ырă сунма, саламланине хуравлама хăнăхасси.
Вуланă текст тăрăх ыйтусем парасси, унăн содержанийĕпе килĕшӳллĕн калаçма хутшăнасси.
Сĕннĕ йĕрке тăрăх текст содержанине каласа парасси, ыйтуллă предложенисенчен, тĕп сăмахсенчен тата çирĕплетӳ пуплевĕнчен тăракан план хатĕрлесси.
Вуланине тата курни-илтнине сӳтсе явмалли пĕлӳсемпе хăнăхусене аталантарасси.
Текст содержанине сăмахпа уçса парасси
Текста улăштармалли пĕлӳсемпе хăнăхтарусене йĕркелесси.
Панă тĕслĕхсем тăрăх диалогсем йĕркелесси.
Диалогсем тăрăх инсценировкăсем хатĕрлесси.
Ӳкерчĕк тăрăх пурте пĕрле, пĕчĕк ушкăнпа е уйрăмшарăн калав хатĕрлесси.

**Вуласси.** Сасăпа вулас ăсталăха ÿстересси. Ăсра вуламалли хăнăхăва аталантарасси.
Сăмах вĕççĕн ăса хывнă сăмахсене тата сăмах çаврăнăшĕсене вуласа ăнланасси.
Вĕренÿ тексчĕсене ăсра е сасăпа вуласси, вĕсенчен кирлĕ информацие суйласа илесси, кирлĕ май страница вĕçĕнчи асăрхаттарусемпе, словарьсемпе усă курасси.
Вĕренÿ тексчĕсене ăсра е сасăпа вуласси, вĕсенчен кирлĕ информацие ăса илесси, унпа харпăр хăй пуплевĕнче усă курасси, çавăн пекех, чĕлхе материалне сăнаса, сăмахсене мĕнле каланине тата çырнине, сăмах пулăвĕн çыхăнăвĕсене, сăмах улшăнăвĕн сăлтавĕсене палăртасси.
Вĕренÿ тексчĕсене ăсра е сасăпа вуланă май вĕсен пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшне ăнланса илесси.
Темиçе палламан сăмахлă вĕренÿ тексчĕсене ăсра вуласси, вĕсен содержанине туллин тĕрĕс ăнланса илесси, текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрасси.
Текстсене ят парасси.
Кирлĕ мар информацие сирсе хăварса, текстсене кĕскетесси.
Текст содержанине ыйтусем тăрăх, планпа килĕшÿллĕн, тĕп сăмахсемпе пуплерĕшсем тăрăх каласа парасси, çавна май глаголсен сăпат тата вăхăт формисене улăштарасси.
Тÿрĕ пуплевлĕ текстсене вуласси.
Сăвăсене илемлĕн вуласси, вĕсене пăхмасăр калама вĕренесси. Диалогсене кирлĕ интонаципе вуласси.
**Чĕлхене ансат тишкересси, терминсемпе усă курасси.**
Алфавит. Саспаллисен ячĕсем тата йĕрки. Уçă тата хупă сасăсем. Хытă тата çемçе сасăсем.
Пĕр-пĕр саспаллипе пуçланакан сăмахсене словарьте шыраса тупма вĕрентесси. Сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма хăнăхтарасси (пуçламăш саспалли тăрах).
Япалана пĕлтерекен сăмахсем. Вĕсене *кам?* тата *мĕн?* ыйтусем лартса тупасси.
Япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсем. Вĕсене *мĕн тăвать? мĕн тавĕ? мĕн турĕ?* ыйтусем лартса тупасси.
Япалан тата унăн ĕçĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем, вĕсене *мĕнле?* ыйту лартса тупасси.
Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнлассн. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем *(хура - шурă, пысăк - пĕчĕк, сарлака - ансăр, пылак - йÿçĕ).* Çывах пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: *васка - хыпалан, кил - пыр, усал - хаяр, аван - лайăх - чипер; илемлĕ - хитре.*
Лексикапа тематика ушкăнĕсем: а) тĕс ячĕсем *{хĕрлĕ, сарă, шурă, хура, хăмар, кăвак* т.ыт.те; *çÿрен, турă, хăла, ула, сарă- хăла*(лаша çинчен);
б) çынна хаклакан сăмахсем *(чипер, илемлĕ, тирпейлĕ, тăрăшуллă, ĕçчен, кахал, наян, мăнтăр, начар* т.ыт.те).
Предложени. Пуплеври предложенисене уйăрасси (маларах вĕреннине çирĕплетесси).
Предложенин тĕп (подлежащипе сказуе- мăй) тата кĕçĕн членĕсем (ячĕсене асăнмасăр).
Предложенисем тума тата вĕсене çырма хăнăхтарасси. Предложенисене ыйтусем *(кам? мĕн? камăн? мĕнĕн? кама? мĕне? камра? мĕнре? камран? мĕнрен? кампа? мĕнпе? камсăр? мĕнсĕр? камшăн? мĕншĕн?)* лартса анлăлатасси.
Пунктуаци. Предложени вĕçне пăнчă, ыйту палли тата кăшкару палли лартасси.
Орфографи.
Хытă уçă сасăллă сыпăк е сăмах вĕçĕнчи [л′], [н′], [т′] сасасене *л, н, т* саспаллисем хыççăн çемçелĕх палли *(ь)* çырса палăртасси: *выльăх, кукăль, супăнь, макăнь, халь, ахаль, макăль, шукăль; ларать, вылять, чупать, тăрашать.*
Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси: *мăрье, кĕсье, тухья, Марье.*
Варăм хупă сасса икĕ пĕр пек саспаллипе палăртасси:
ăру-тăванлăх сăмахĕсенче: *атте, анне, асатте, шăллăм, аппа, кукка, мăн акка;*
çулталăк вăхăчĕсен ячĕсенче: *çулла, хĕлле, кĕркунне, çуркунне;*
хальхи вăхăтри нумайлă хисепри 3 сăпатри глаголсен формисенче: вулаççĕ, вуламаççĕ, ĕçлеççĕ, ĕçлемеççĕ, выляççĕ, вылямаççĕ.
Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси: *ма-ши-на, вы-ля, япа-ла, пĕ-лĕт-сем.*
Çын ячĕпе хушаматне тата ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк саспаллирен пуçласа çырасси: *Иванова Мария Васильевна, Михайлов*

*Иван Викторович, Мăрмăр, Кампур, Улайкка, Аньяр, Хураçка, Канаш, Шупашкар, Шурча, Çавал, Кĕçĕн Çавал, А тăл, Сĕве.*
Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çырасси: *а) Миша, Наташа, Коля, Петя, Таня;*
*а) машина, трактор, комбайн, завод, фабрика, самолёт, ракета;*
*б)парта, учитель, директор; в) колхоз, ферма, сад, дыня, помидор; г) кухня, стакан, щётка.*
Таса тата илемлĕ çырасси
Çыру гигиени хăнăхăвĕсене (тĕрĕс ларма, тетраде хума, ручкăна тытма т.ыт.те пĕлнине) çирĕплетесси.
Пĕчĕк саспаллисене йывăрлăх енчен ушкăнласа (5 ушкăн) çырасси: 1) и, ш, г, п, т, й, н, р, у, ӳ; 2) л, м, ц, щ, ь, ы; 3) а, ă, ю, ф, д, б, я; 4) с, ç, е, ĕ, ё, ч, ъ, в; 5) э, х, ж, к.
Пысăк саспаллисене йывăрлах енчен ушкăнласа (4 ушкăн) Çырасси: 1) Й, И, Ш, Ц, Щ, Ч, Ы, Д М, А, Ă; 2) О, С, Х, Б, Е. Ĕ, Ё, Ц 3, Э, Я; 3) Ж, У, Ӳ, Н, К, Ю, Р, Д Ф; 4) Г, Д Т, Б, Д.
Таса та илемлĕ, тĕрĕс çырмалли сăмахсем: алсиш, анне, аппа, асатте, атте, ăмăрт кайăк, библиотека, больница, выльăх, вырсарни кун, герой, дежурнăй, ешчĕк, ёлка, журнал, йăмак, кĕçнерни кун, кĕркунне, кĕсье, класс, класра, колхоз, коньки, комбайн, комбайнер, кукамай, кукаçи, кукка, лётчик, майка, мунча, пан улми, пичче, ракета, самолёт, çулла, çуркунне, тăвайкки, тетрадь, трактор, тунти кун, тыр пул, улмуççи, учитель, учительница, ухĕ, физкультура, хĕлле, чăх- чĕп, шăллăм, шăмат кун, щётка, ытлари кун, эрне кун, юлан ут, юн кун, ялав.

## 1-мĕш класс

## Чăваш чĕлхи урокĕсен тематика планĕ

| № п/п | Тема урока | Количество часов | | | Виды, формы контроля |
|---|---|---|---|---|---|
| | | всего | контрольные работы | практические работы | |
| 1. | Шкула. Пуплев (В школу!)<br>Ача-пăча вăййисем. Теттесем. Хутшăну (Детские игры.Игрушки. Общение.) | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |
| 2. | Урокра. Шкул ачин кун йĕрки. Калу тата çыру (На уроке. Режим дня школьника. Говорение и письмо.) Тăван кил-йыш. Çыхăнуллă пуплев (Семья. Речь.) | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |
| 3. | Тăван ен. Кĕрхи садра. Улма-çырла. Пахча. Пахча çимĕç. Предложени. Сăмах (Родная | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | сторона. В осеннем саду. Фрукты. В огороде. Овощи. Предложение. Слово.)  Сыпăк, пусăм | | | | |
| 4. | Килти выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк.  Пуплеври сасăсемпе таврари сасăсем. Сасă (Домашние животные, птицы. Звуки. Звуки речи. Звук.)<br><br>Тăван тавралăх. Вăрман.  Тискер кайăксем. Уçă тата хупă сасăсем (Природа нашего края. Лес. Дикие животные. Гласные и согласные звуки.) | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |
| 5. | Тăван тавралăх. Вăрманти йывăçсем. Уçă тата хупă сасăсем. (Природа нашего края. Лес. Деревья. Гласные и согласные звуки.) | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |
| 6. | Ялти ĕçсем. Тырă вырни. Утарта. Текст. Предложени. Сăмах. Уçă тата хупă сасăсем<br><br>Ялти ĕçсем.  Утарта.  Текст. Предложени. Сăмах. Уçă тата хупă сасăсем (Сельские работы. На пасеке. Текст. Предложение. Слово. Гласные и согласные звуки.) | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |
| 7. | [а] сасă.  А, а сас паллисем (Звук [а]. Буквы А, а.)<br><br>[у] сасă. У, у сас паллисем (Звук [у]. Буквы У, у.) | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |
| 8. | [ă] сасă.  Ă, ă сас паллисем (Звук [ă]. Буквы Ă, ă.). Çырса илни. | 1 | 0 | 0 | Контрольная работа |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | [н] сасӑ. Н, н сас паллисем. «Анна, ан!» текст (Звук [н]. Буквы Н, н. Текст «Анна, спускайся!») | | | | |
| 9. | [л] сасӑ. Л, л сас паллисем. «Ула уланӑ» текст (Звук [л]. Буквы Л, л. Текст «Ула лаял.»)<br><br>[м] сасӑ. М, м сас паллисем. (Звук [м]. Буквы М, м. Текст « | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |
| 10. | [т] сасӑ. Т, т сас паллисем. «Антун, ут утлан!», «Анна, тумлан!» текстсем (Звук [т]. Буквы Т, т. Тексты «Антун, садись на коня!»<br><br>[п] сасӑ. П, п сас паллисем. «Аппа, пӑтӑ!», «Антун пулла аннӑ» текстсем (Звук [п]. Буквы П, п. Тексты «Сестра, кашу!», «Антон на рыбалке») | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |
| 11. | [ш] сасӑ. Ш, ш сас паллисем. «Шӑлан татнӑ», «Антун ташланӑ» текстсем «(Звук [ш]. Буквы Ш, ш. Тексты «Собирали шиповник», «Антон плясал»)<br><br>[р] сасӑ. Р, р сас паллисем. «Урамра ӑшӑ» текст (Звук [р]. Буквы Р, р. Текст «На улице тепло») | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |
| 12. | [ы] сасӑ. Ы, ы сас паллисем. «Утарта», «Ыраш» текстсем (Звук [ы]. Буквы Ы, ы.Тексты «На пасеке», «Рожь»)<br><br>[в] сасӑ. В, в сас паллисем. «Ан шавла!» текст (Звук [в]. Буквы В, | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | в. Тексты «Не шуми».) | | | | |
| 13. | [х] сасă. Х, х сас паллисем. «Улăхра» текст (Звук [х]. Буквы Х, х. Текст «На лугу») | 1 | 0 | 0 | Устный опрос<br>пись<br>менный кон<br>троль |
| 14. | Е, е сас паллисем [йэ] сыпăка пĕлтерни. «Пĕчĕк пахчаçă», «Маринепе Энтип» текстсем (Обозначение буквами Е, е слог[йэ]. Тексты «Маленький садовод», «Марина и Антип») | 1 | 0 | 0 | Устный опрос<br>Письменный контроль |
| 15. | Е, е сас паллисем. А. Ĕçхĕлĕн «Анне» сăвви (Буквы Е, е. Стихотворение А. Эсхеля «Мама**»).Çырса илни.** | 1 | 1 | 0 | Контрольная работа |
| 16. | [о] сасă. О, о сас паллисем. «Чĕр чун кĕтесĕ» текст (Звук [о]. Буквы О, о. Текст «Живой уголок»)<br>(о) сасă, ё сас палли. «Мĕнле сăмах çырнă» текст (Звук [о]. Буква ё. Текст «Какое слово написано») | 1 | 0 | 0 | Устный опрос<br>Письменный контроль |
| 17. | Вулав хăнăхăвĕсене çирĕплетесси. «Кун ячĕсем» текст (Закрепление навыков чтения. Текст «Название дней недели») | 1 | 0 | 0 | |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 18. | [б], [б’] сасăсем. Б, б сас паллисем. «Библиотекăра» текст (Звуки [б], [б’]. Буквы Б, б. Текст «В библиотеке».) | 1 | 0 | 0 | Устный опрос<br>Письменный контроль |
| 19. | г] [г’] сасăсем. Г, г сас паллисем. «Пĕрремеш космонавт» текст (Звуки [г] [г’]. Буквы Г, г. Текст «Первый космонавт») | 1 | 0 | 0 | Устный опрос<br>Письменный контроль |
| 20. | [д] [д’] сасăсем. Д, д сас паллисем. Р. Сарпин «Дельфин» сăвви (Звуки [д] [д’]. Буквы Д, д. Стихотворение Р. Сарпи «Дельфин») | 1 | 0 | 1 | Практическая робота |
| 21. | [з] сасă. З, з сас паллисем. «Шкул пахчинче» текст (Звук [з]. Буквы З, з. Текст «В школьном огороде») | 1 | 0 | 0 | Письменный контроль |
| 22. | [ф] [ф’] сасăсем. Ф, ф сас паллисем. «Фермăра» текст (Звуки [ф] [ф’]. Буквы Ф, ф. Текст | 1 | 0 | 0 | Устный опрос<br>Письменный контроль |
| 23. | [ж] сасă. Ж, ж сас паллисем. «Хисеплĕ çынсем» текст (Звук [ж]. Буквы Ж, ж. Текст «Уважаемые люди») | 1 | 0 | 0 | Устный опрос<br>Письменный контроль |
| 24. | [ц] сасă. Ц, ц сас паллисем. «Циркра» текст (Звук [ц]. Буквы Ц, ц. Текст «В цирке») | 1 | 0 | 1 | Устный опрос<br>Письменный контроль |
| 25. | [щ] сасă. Щ, щ сас паллисем. В. Маяковскин «Лайăх тени мĕн тени…» сăвви (Звук [щ]. Буквы Щ, щ. Стихотворение В. Маяковского «Что такое хорошо, что такое плохо») | 1 | 0 | 0 | Практическая работа |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 26. | Уйӑракан хытӑлӑх (ъ) тата ҫемҫелӗх (ь) паллисем. В. Харитоновӑн «Ҫил ачи» сӑвви (Твердый знак (ъ). Стихотворение В. Харитонова «Ветерок»).**Ҫырса илни**. | 1 | 1 | 0 | Устный опрос<br>Письменный контроль |
| 27. | Тӑван Ҫӗршыв. К. Ушинскин «Тӑван ҫӗршыв» калавӗ (Родная страна. Рассказ К. Ушинского «Родина»)<br>Чӑваш Республики. Юхма Мишшин «Тӑван ҫӗршыв» калавӗ (Чувашская Республика. Рассказ Юхма Мишши «Родная страна») | 1 | 0 | 0 | Письменный контроль |
| 28. | Тӑван ҫӗршыв чӗнет. В. Сухомлинскин «Карӑшпа каюра» юмахӗ (Зов родной стороны. Сказка В. Сухомлинского «Коростель и крот») | 1 | 0 | 1 | Устный опрос |
| 29. | И. Я. Яковлев - чӑваш халӑхне ҫутта кӑларакан (И. Я. Яковлев - просветитель чувашского народа.) | 1 | 0 | 1 | Практическая работа. |
| 30. | К. Ивановӑн «Сентти», «Чӗкеҫ» сӑввисем ( Стихотворения К. Иванова «Сентти», «Ласточка») | 1 | 0 | 0 | Письменный контроль |
| 31. | Чӑваш халӑхӗн чаплӑ ывӑлӗ. Юхма Мишшин «Виҫҫӗмӗш 1космонавт-летчик» калавӗ (Великий сын чувашского народа. Рассказ Юхма Мишши «Третий летчик-космонавт») | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |
| 32. | Аслӑ Ҫӗнтерӳ кунӗ. «Ҫӗнтерӳ кунӗ» текст (Великая победа. Текст «День Победы») | 1 | 0 | 0 | Устный опрос |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 33. | Прмежуточнся аттестация. **Списывание печатного текста.** | 1 | 1 | 0 | Контрольная работа |
| ОБЩЕЕ КОЛИЧЕСТВО ЧАСОВ ПО ПРОГРАММЕ | | 33 | 3 | | |

## 2- мĕш класс

| № | Тема | Сехет шуче |
|---|---|---|
| 1 | 1-мĕш класра вĕреннине аса илни.Сасă тата сас палли | 32 |
| 2 | Сăмах. Япала ячĕ | 19 |
| 3 | Глагол | 17 |
| 4 | Паллă ячĕ | 12 |
| 5 | Предложени | 13 |
| 6 | 2- мĕш класра вĕреннине пĕтĕмлетни | 9 |
| Пĕтĕмпе | | 102 |

## Чăваш чĕлхи урокĕсен тематика планĕ.

| **№ п\п** | **Раздел** | **Урок теми** | **Сехет шучĕ** |
|---|---|---|---|
| 1 | 1-мĕш класра вĕреннине аса илни | Хăрушсăрлăх правилисене аса илесси. Предложени, сăмах, сасă, сас палли. | 1 |
| 2,3 | | Предложени, сăмах, сасă, сас палли. | 2 |
| 4 | | Çырса илни «Авăн уйăхĕ» | 1 |
| 5 | Сасă тата сас палли | 1 §. Алфавит. | 1 |
| 6 | | 2§. Уçă сасăсемпе хупă сасăсем. | 1 |
| 7 | | «Кĕркунне» темăпа калав çырасси | 1 |
| 8 | | 3§. Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсем. | 1 |
| 9, 10 | | 4§. Хытă хупă сасăсемпе çемçе хупă сасăсем. | 2 |
| 11 | | Диктант «Пирĕн асатте» | 1 |
| 12 | | 5§. Сывлăх сунасси. Сывпуллашасси. | 1 |
| 13 | | Диалог çырасси. | 1 |
| 14 | | 5§. Сывлăх сунасси. Сывпуллашасси. | 1 |
| 15, 16 | | 6§. Хытă уçă сасăллă сăмахсенче çемçелĕх палли (ь) çырасси. | 2 |
| 17 | | Изложени «Ашă чух» | 1 |
| 18, | | 6§. Хытă уçă сасăллă сăмахсенче çемçелĕх палли (ь) çырасси. | 1 |
| 19 | | 7§. Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси. | 1 |
| 20, 21 | | 8§. Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртни. | 2 |
| 22 | | 9§. Тăванлăх-хурăнташлăх сăмахĕсем. | 1 |
| 23 | | Ыйтусене хуравласа ÿкерчĕк тăрăх калав çырасси. | 1 |
| 24, 25 | | 10§. Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене | 2 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | çырасси | |
| 26 | | 11§. Орфографи словарĕ. | 1 |
| 27 | | Тĕрĕслев диктанчĕ. «Шупашкар» | 1 |
| 28 | | 12§. Сăмах сыпăкĕ. | 1 |
| 29 | | 13§. Самахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси. | 1 |
| 30 | | Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни. | 1 |
| 31, 32 | | 14§. Текст. | 2 |
| 33 - 35 | Сăмах. Япала ячĕ. | 15§. Кам? Мĕн? ыйтуллă сăмахсем. | 3 |
| 36 | | Çыхăнуллă  пуплев. | 1 |
| 37 | | Диктант «Пыл хуçисем» | 1 |
| 38,  39 | | 16§. Пĕр япалана пĕлтерекен сăмахсем. | 2 |
| 40, 41 | | 17§. Япала нумайййине пĕлтерекен сăмахсем. | 2 |
| 42 | | 18§. Çын ячĕсене, хушамачĕсене, ашшĕ ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. | 1 |
| 43 | | 19§. Паллашу сăмахĕсем. | 1 |
| 44, 45 | | 20§. Выльăх-чĕрлĕх ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. | 2 |
| 46 | | Диктант «Халăх сăнанинчен» | 1 |
| 47 - 49 | | 21§. Хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. | 3 |
| 50 | | 22§. Пĕлтерӳ  çырасси. | 1 |
| 51 | | Пĕлтерӳ  çырасси. | 1 |
| 52 -55 | Ĕçе пĕлтерекен сăмахсем. | 23§. Мĕн тăватъ? мĕн тăваççĕ? ыйтуллă ĕç-хĕлсем. | 4 |
| 56 | | Укерчĕксем тăрăх план туса калав çырасси | 1 |
| 57, 58 | | 23§. Мĕн тăватъ? мĕн тăваççĕ? ыйтуллă ĕç-хĕлсем. | 2 |
| 59 | | 24§. Мĕн турĕ? Мĕн турĕç? ыйтуллă ĕç-хĕлсем. | 1 |
| 60 | | Ыйтусене хуравласа пĕчĕк калав çырасси | 1 |
| 61 | | 24§. Мĕн турĕ? Мĕн турĕç? ыйтуллă ĕç-хĕлсем. | 1 |
| 62 | | Диктант «Çăлтăрсем чĕнеççĕ» | 1 |
| 63 - 66 | | 25 §. Хирĕçле тата пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ ĕç-хĕлсем. | 4 |
| 67 | | 26§. Тав тăвасси. | 1 |
| 68 | | Çырса илни. «Надежда Павлова» | 1 |
| 69 -71 | Япала паллине пĕлтерекен сăмахсем. | 27§. Япала паллине пĕлтерекен самахсене мĕнле? ыйту лартса тупасси. | 3 |
| 72 | | Диктант. «Ирхине» | 1 |
| 73 | | 28§. Тĕсе пĕлтерекен сăмахсем. | 1 |
| 74 | | Изложени. «Йытăпа унăн мĕлки» | 1 |
| 75 | | 29§. Çынна сăнлакан сăмахсем. | 1 |
| 76 | | 30§. Çыру çырасси. | 1 |
| 77 | | Çыру çырасси. | 1 |
| 78 | | 31§. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (антонимсем). | 1 |
| 79, 80 | | 32§. Пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (синонимсем). | 2 |
| 81, 82 | Предложени. | 33§. Пуплеве предложенисем çине уйăрасси. | 2 |
| 83, 84 | | 34§. Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем. | 2 |
| 85 | | Сочинени. «Çуркунне çывхаратъ» | 1 |
| 86, 87 | | 35§. Предложенин членĕсем хушшинчи çыхăну. | 2 |
| 88 | | Тĕрĕслев изложенийĕ  «Чĕрĕп» | 1 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 89 | | Диктант. «Йытă çури» | 1 |
| 90, 91 | | 36§. Калуллă, ыйтуллă предложенисем. Кăшкăрullă предложенисем. | 2 |
| 92 | | Çырса илни. «Тăвайккинче» | 1 |
| 93 | | Укерчĕк тăрăх ыйтуллă предложенисем йĕркелесе çырасси | 1 |
| 94 | Вĕреннине пĕтĕмлетни. | 37§. Сасăсемпе сас паллисем, алфавит | 1 |
| 95, 96 | | 38§. Япала ячĕ, ĕç-хĕл тата паллă ячĕ çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетни. | 2 |
| 97 | | Изложени «Ташă ăсти» | 1 |
| 98 | | 39§. Предложени çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси. | 1 |
| 99 | | Тĕрĕслев диктанчĕ «Коля» | 1 |
| 100 | | Сочинени. «Асра юлнă кун» | 1 |
| 101, 102 | | Вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси | 2 |

**3– мĕш класс**

**Кĕтекен результатсем**

**Вĕренекенсем çак ăслайсене хăнăхмалла:**

45-50 сăмахлă текста каллиграфи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс те таса, саспаллисене сиктерсе хăвармасăр, пăтраштармасăр пăхса çырма;
45-50 сăмахлă текста итленипе (диктант) çырма;
сăмаха сыпăклама, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма;
çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма, вăрăм хупă сасăллă сăмахсене (программăра кăтартнисене) тĕрĕс çырма;
çын ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырма;
сăмахсен сасă тытăмне тишкерме (вĕсене сыпăклама, уçă тата хупă сасăсене, сасăсемпе саспаллисен йĕркине тата хисепне палăртма);
япалана, унăн ĕçне, паллине пĕлтерекен сăмахсене ыйту лартса тупма;
предложенин тĕп членĕсене – подлежащипе сказуемăя – тупма;
ыйтусем тăрăх ансат предложени членĕсем хушшинчи çыхăнăва палăртма;
предложение пысăк саспаллирен пуçласа çырма, ун вĕçне, интонацие кура, пăнчă, ыйту е кăшкăру палли лартма;
50-55 сăмахлă текст тăрăх ыйтусене хурвласа изложени çырма; пĕрлехи шухăшлă 2-3 предложени тума, вĕсене çырма.

***Предметăн пайрам результачĕсем:***

- тăван чĕлхери тĕп сасăсене, хытă тата çемçе сасăсене сăмахра паллама, çырура палăртма пĕлни;
- сас паллисене, вĕсен çыхăнăвĕсене, сăмахсене, предложенисене тĕрĕс евĕрлесе çырса илме, тĕрĕслеме вĕренни;
- уйрăм сăмахсене, 3-4 сăмахран тăракан, тытăмĕпе ансат предложенисене илтнĕ тăрăх çырма пултарни;
- чĕлхе пĕлĕвĕн ăнлавĕсемпе терминĕсене уçăмлани.

***Харкам результатсем:***

- ачасем Тăван çĕршыв, тăван халăх, тăван чĕлхе ăнлавсене ăша хывни: хăйсем хăш халăх ывăл-хĕрĕ пулнине ăнланни, вĕсен тăван халăха хисеплес туйăм амаланма пуçлани:

- ачасем таврари пурнăç, этем, çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатни, тавракурăм йĕркеленсе пыни:
- харпăр хăйĕн тата тантăшĕсен ĕçĕ-хĕлне сăнас-хаклас ăслай-хăнăхусене алла илсе пыни.

***Пур предметсене вĕрентнĕ май кĕтекен результатсем:***

- ачасен шухăшлавĕ пур енлĕн аталанса, вĕсем тишкерӳ, пĕтĕçтерӳ, пĕтĕмлетӳ ĕçĕсене вĕренсе пыни:
- ачасен пуплевĕ пур енлĕн аталанса, вĕсем пуплев ĕçĕ-хĕлĕсене вĕренсе пыни:
- кĕнекепе ĕçлеме вĕренсе пыни.

***Хутла вĕрентнĕ май ачасен универсаллă вĕренӳ ĕçĕсене йĕркелесси***

Вĕрентӳ ĕçĕнче кашни предмет шалашĕнчех тĕп пахалăх тĕллевĕсене шута илсе ĕçлемелле. Хутла вĕрентес ĕçре вĕсем çаксем шутланаççĕ.

- ачасен нумай пĕлес-вĕренес, харпăр хăй ĕç-хĕлне йĕркелеме хăнăхас кăмăлне чĕртсе ярасси, аталантарасси;
- вĕсене хăйсен харкамлăхне ăнланма пулăшасси, таврари тĕнчене хăйне евĕр курма-йышăнма, харпăр хăй хăтланăшĕсене хак пама, йывăрлăхсене çĕнтерме вĕентсе пырасси, вĕсен ăславлă мехелне аталантарасси;
- ачасене çынсем хушшинче çураçуллă пурăнма, ыттисене пулăшма хавас пулма, пĕтĕм этемлĕх пахалăхĕсене ăнланса ăша хума пулăшасси;
- ачасене вĕсем кашниййĕ хăйĕн тăван çĕршывĕн пĕчĕк гражданинĕ пулнине ăша хума пулăшасси;
- вĕренекенсене тавралăха, çут çанталăка, харпăр хăйне, сывлăхне упрама вĕрентесси.

<u>Йĕркелӳ ĕçĕсем</u> ачасене вĕрентӳ ĕç-хĕлне, унăн тапхăрĕсене (ĕç тĕллевне уçăмласси, планласси, ĕçе пурнăĕласси, результачĕсене хакласси-пахаласси , тӳрлетесси) уçăмласа йĕркелеме хăнăхтарассипе çыхăннă. Ку вăл питех те кăткăс ĕç. Хутла вĕрентнĕ май çак хăнăхусем майĕпен йĕркеленсе пыраççĕ.

<u>Универсаллă пĕлӳ ĕçĕсене</u> йĕркелессипе çыхăннă хăнăхтарусем вĕрентӳ комплексĕн кашни компонентĕнчех тĕп вырăнта. Ыттисен тата хăйсен пуплевне тимлесе ачасем чĕлхен элеменчĕсене асăрхама, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăннине курма хăнăхаççĕ. Пуплеври предложенисене, предложенири сăмахсене, сăмахри сасăсене уйăрни, каялла сасăсенчен сăмахсем, сăмахсенчен предложенисем, предложенисенчен текст калăпланă май вĕсем тишкерӳ, пĕтĕçтерӳ ĕçĕсене вĕренсе пыраççĕ.

*Предметăн пайрăм задачисем:*

- ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси:
- ĕçĕн терминсемпе паллаштарасси, вĕсемпе усă курма хăнăхтарасси;
- тĕрлĕ енлĕ тишкерӳ вĕрентесси;
- капăшсене пĕрлĕхлĕ курма тата унăн пайĕсене палăртма хăнăхтарасси;
- ачасен вĕтĕ моторикине аталантарасси.

*Харкам задачăсем:*

- ачасене шкул пурнăçне, йĕркесене, вĕренекен яваплăхĕсене ăнланма, ăша хывма, пурнăçласа пыма пулăшасси;
- пĕр-пĕринпе, аслисемпе кăмăллăн хутшăнма вĕрентсе пырасси;
- хутшăну тата пуплев этикетне малалла тăсасси;
- *«çемье»: «йăх»: «ял-йыш»* ăнлавсене уçăмлама, ăса хума пулăшасси.

*Пур предметсене те вĕрентнĕ май пурнăçламалли задачăсем:*

- вĕренӳ ĕç-хĕлĕн уйрăмлăхне ăша хума, задачисене алла илсе, пурнăçласа пыма пулăшасси;
- тантăшĕсен тата харпăр хăй ĕçне сăнама, çитменлĕхсемпе ăнăçусене палăртма хăнăхтарса пырасси
- пулăмсемпе япаласене, капăшсене тишкерме, танлаштарма, пĕр пеклĕхсемпе уйрăмлăхсене палăртма вĕрентесси.

**Вĕренĕвĕн Универсаллă Действийĕ (ВУД) вулав**

Ку термина пĕтĕмшле илсен вĕренӳ ăслай тесе ăнланмалла, урăхла каласан, ВУД вăл - субьект унăн социаллă опыта ăнланса тата хастаррăн ăса хывнă май хăй т\лл\нех аталанма пултарни. Вĕренекен харпăр хăй тĕллĕнех çĕнĕ пĕлӳсене ăнăçлă ăса хывма, ăслайсемпе компетентноçсене калăплама (çав вăхăтра вĕренӳ ăслайне те) пултарнин никĕсĕнче – универсаллă вĕренӳ действийĕсем. Çапла вара вĕренӳ ăслайне ăса хывасси вĕренекенĕн вĕренӳ ĕç-хĕлĕн мĕн-пур компоненчĕсене туллин ăса хывмаллине пĕлтерет. Ку компонентсем шутне çаксем кĕреççĕ: пĕлӳсем туянас (познавательные) тата вĕренӳ мотивĕсем, вĕренӳ тĕллевĕ, вĕренӳ задачи, вĕренӳ ĕçĕсемпе (учебные действия) операцийĕсем, ориентировка, материала урăхлатни (преобразование материала), тĕрĕслев тата хаклав. Вĕренес ăслай – ачасем предметлă пĕлӳсене ăса хывассин, ăслайсемпе компетенцисене калăплассин тухăçлăхне ӳстермелли тĕп факторсенчен пĕри.

**Вĕренĕвĕн Универсаллă Действийĕсен тĕп функцийĕсем:** вĕренекенĕн харпăр хăй тĕллĕнех пĕлӳсем туянас, вĕренӳ тĕллевĕсене лартас, тивĕçлĕ хатĕрсем шыраса тупса вĕсемпе усă курас, ĕç-хĕл юхăмĕпе результачĕсене тĕрĕслес тата пахалас майсене тупма пулăшасси;
харкамлăха килĕшӳллĕн аталантармалли условисем туса парасси; пĕлӳсене ăнăçлăн ăса хывассин, ăслайсене, хăнăхусене тата компентноçсене калăпласа çивĕчлетессин тухăçлăхне ӳстересси;
Вĕренӳ ĕçĕсен универсаллăхĕ çакăнта курăнать. Вĕсем предмет шайĕнчен тухса метапредмет шайне хăпараççĕ; харкамлăхăн пĕтĕмĕшле культура, харкам, пĕлӳсем туянас тата тĕллĕнех аталанассине пĕрлĕхлĕн тарăнлатма май параççĕ; пĕлӳсем туянас юхăмăн пур шайĕсене те пĕр тĕвве çыхăнтарма май параççĕ; ача-пăчан вăл е ку ĕç-хĕлне йĕркелессин тата асăрхассин никĕсĕ пулса тăраççĕ.

**Вĕренĕвĕн Универсаллă Действийĕн ушкăнĕсем**

Пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн тĕп тĕллевĕсемпе килĕшӳллĕн ВУД 4 ушкăнне уйăрма пулать: харкамлă (личностный), регулятивлă (саморегулятивлă та), пĕлӳсем туянас (познавательный) тата хутшăнуллă (коммуникативлă).

**Харкамлă ВУДсем**

*Вĕренӳ ĕç-хĕлĕпе çыхăнтарса, харкамлă ĕçсен виçĕ тĕсне уйăратпăр:*

1. Професси тĕлĕшĕнчен харкам вырăнне шырани.
2. Пĕлтерĕшлĕх (вĕренӳ тĕллевĕпе сунăмĕ, е, урăхла каласан, вĕренӳ результачĕпе унăн кирлĕлĕхĕ хушшинчи çыхăнăва палăртни). Вĕренекенĕн хăйне çак ыйтăва памалла та ăна хуравлама пултармалла: «Мĕн тума тата мĕн тĕллевпе вĕренетĕп эпĕ?»
3. Кăмăл-сипетлĕх ориентацийĕ. Вĕренсе ăса хывакан содержание харкамлăх тата социаллă опыта кура мораль тĕлĕшĕнчен хаклани.

**Регулятивлă ВУДсем**

1. Мĕн пĕлнине тата мĕн пĕлменнине шута илсе вĕренӳ задачине палăртмалли тĕллеве лартни.
2. Ĕçсен йĕркин планне туни; вĕçĕнчи результата кура пайăр ĕçсен тĕллевĕсене палăртни.
3. Прогноз туни. Урăхла каласан, результата тата туянакан пĕлӳсен шайне малтанах курса тăни.
4. Ĕç майне тата унăн результатне малтанах палăртнă калăппа танлаштарса тĕрĕслени.
5. Коррекци - результата вĕренекен хăй, юлташĕсем тата учитель хаклавне кура плана тата ĕç майĕпе йĕркине улшăнусем кĕртни.
6. Хаклав – мĕне вĕреннине тата мĕне вĕренмеллине, вĕреннин шайĕпе пахалăхне вĕренекен хăй палăртни; ĕç результатне хаклани.
7. Саморегуляци – йывăрлăхсене çĕнтермелли майсене тупса палăртас пултарулăх.

**Пĕлӳсем туянас ВУДсем**

Кунта пĕтĕмĕшле вĕренӳ(1), паллăпа символ ĕçĕсене (2) логика вĕренӳ ĕçĕсене(3) тата ыйтăва лартса ăна татса панине(4) кĕртетпĕр. Вĕсене хăйсене çапларах вакласа яма пулать.

*1. Пĕтĕмĕшле вĕренӳ универсаллă ĕçсем:*

- пӗлӳсене туянас тӗллеве харпӑр хӑй тӗллӗнех уйӑрса палӑртни;
- пуҫламӑш шкулшӑн шӑл ҫемми ИКТ тата информацин ытти ҫӑлкуҫӗсемпе усӑ курса тивӗҫлӗ информацие тупса уйӑрни;
- пӗлӳсен тытӑмне палӑртни;
- сасӑллӑ тата ҫырулла пуплев ӑслани;
